## Çăлăнăç

Килтех ӳссе çитĕнтĕм,

Этем шутне ир кĕтĕм.

Атте-анне нушине

Часах хыврăм чĕрене.

Салху шухăш хупласан,

Пуç ыратсан, ăш çунсан

Пурччĕ ман пĕр çăлăнăç —

Аслă уйри пурăнăç.

Тухатăп та утатăп,

Вăрмана та пыратăп;

Ирĕкри уç сывлăша

Çăтатăн çеç хам ăша.

Тăван уй-хире савса,

Çĕнĕ сăвăсем хурса

Йĕклĕхре юрлатăп,

Каллех ыррăн туятăп.

*1919, август.*

*Элкер, С. Çăлăнăç : [сăвă] // Элкер, С. Хурапа шурă. Тĕрлĕ вăхăтра çырнисем : проза, поэзи, аса илӳсем, кун кĕнекинчен, çырусем, хаклавсем / С. Элкер ; В. Г. Родионов пухса йĕркеленĕ. – Шупашкар, 1994. – С. 212.*